28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
25
ЮНКУН
79(6830) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Чăваш республики 25 çул тултарнине тылра çӗнӗ паттăр ӗçсем тунипе кӗтсе илер!

Чăваш АССР-ӗнчи мӗнпур рабочисемпе работницăсене, колхозниксемпе колхозницăсене, культурăпа наука работникӗсене

ХАКЛĂ ЮЛТАШСЕМ!

Кăçалхи июнӗн 24-мӗшӗнче Чăвашсен Автономиллӗ Советлă Социализмлă республики 25 çул тултарать. Чăвашсен Автономиллӗ облаçӗ тăвасси çинчен калакан историллӗ декрета аслă Ленин алă пусса çирӗплетнӗренпе чӗрӗк ӗмӗр иртрӗ. 1925 çулта вара пирӗн Автономиллӗ облаçа Автономиллӗ Советлă Социализмлă Республика туса хунă.

Ӗмӗрсем хушши патша чиновникӗсем тата хăйӗн нациллӗ буржуазийӗ пусмăрласа пурăннă чăваш халăхӗ Октябрьти Социализмлă Революцие тата Совет власне пула, ирӗклӗ те тулийлӗ пурăнма право туянчӗ, Совет çӗршывӗнчи халăхсен аслă семьин пӗртан праволлă членӗсенчен пӗри пулса тăчӗ. Большевиксен партийӗ ертсе пынипе, аслă çулпуçсем Ленинпа Сталин çул кăтартса пынипе, аслă вырăс халăхӗ тăванла пулăшнипе, Чăваш республикинчи ӗçсыннисем хăйсен советлă социализмлă государственноçне туянчӗç.

Сталинпа пилӗкçуллăхсем тата колхоз стройӗ пирӗн Тăван республикăн сăн-сăпатне тӗпренех улăштарчӗç. Пысăк фабрикăсемпе заводсем туса лартнă. Чăваш республикинче инженерсем, техниксем, квалификациллӗ рабочисем нумай ӳссе çитӗнчӗç. Колхозсем çӗнетнӗ тăван çӗр вăйлă тырпул пама тытăнчӗ. Ӗмӗрхи сухалуçсем вырăнне хăвăртлă тракторсем ӗçлеççӗ. Пирӗн хуласемпе ялсенче çак иртнӗ çулсенче темиçе çӗр шкул, клубсем, сывлăха сыхлакан учрежденисем нумай туса лартнă, хамăр театрсем, аслă вӗренӳ заведенийӗсем туса лартнă. Нациллӗ совет интеллигенцийӗ çуралса ӳсрӗ. Чăваш халăхӗн культури—формипе нациллӗ, содержанийӗпе социализмлă культура—чеченленсе кайрӗ. Партипе правительство ывăнма пӗлмесӗр тăрăшнипе пула, чăваш халăхӗ ӗмӗрхи чиртен—трахомăран тасалчӗ.

Хуçалăхпа культура строительстви нче тунă çитӗнӳсемшӗн пирӗн республикăна Ленин орденӗпе наградăланă.

Отечественнăй вăрçă кунӗсенче Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигентсем, фронта пулăшас тесе, ывăнма пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Производство планне уйăхран уйăхах иртерсе тултаракан предприятисемпе артельсем пирӗн сахал мар. Отечественнăй вăрçă вăхăтӗнчи кашни çулах республикăри колхозсем вăйлă тырпулшăн хӗрӳлӗн кӗрешрӗç, государство умӗнчи хăйсен обязательствисене тӳрӗ кăмăлпа тата вăхăтра пурнăçласа пыччӗç. Чăваш çӗршывӗнчи совет интеллигенцийӗ рабочисемпе колхозниксене производствăра çитӗнӳсем тума хăйӗн вăйне шеллемесӗр пулăшса пырать. Отечественнăй вăрçă вăхăтӗнче тылра вăя шеллемесӗр ӗçленӗшӗн 388 çынна Совет Союзӗн орденӗсемпе тата медалӗсемпе наградăланă. 3.630 çынна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине парса наградăланă.

Пирӗн çитӗнӳсем пӗчӗк мар. Анчах та вӗсем пирӗн пуçа çавăрса ямалла мар. Вăрçă халӗ пӗтмен-ха, фронтсенче халӗ те хаяр çапăçусем пулса пыраççӗ-ха, пирӗн çакна асра тытас пулать. Эпир çӗнтересси халӗ ӗнтӗ инçе мар. Анчах Сталин юлташ пире çапла вӗрентет: çӗнтерӳ хăй тӗллӗнех килмест. ăна вăйлăн çапăçса тата хӗрӳллӗн ӗçлесе çӗнтерсе илмелле. Хамăран чаплă праçника—республика 25 çул тултарнине — кӗтсе илме хатӗрленсе, пирӗн хамăран ăслă çулпуçăн Сталин юлташăн çак кăтартăвне çирӗппӗн асра тытса тăрас пулать.

Юбилейччен вăхăт нумай юлмарӗ. Чăваш халăхӗн пурнăçӗнчи çак историллӗ куна тивӗçлипе кӗтсе илес тесен, пирӗн мӗн тумалла-ха?

Хамăран республикăна тунăранпа 25 çул çитнине кӗтсе илме хатӗрленесси колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче вăрçăпа хуçалăх тӗлӗшӗнчи питех те пысăк задачăна—çуракине ирттерес задачăна—пурнăçа кӗртессипе пӗр вăхăтра килет.

Пирӗн колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем, ялхуçалăх специалисчӗсем умӗнче çуракине кӗске вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса ирттерес, çураки планне пур культурăсем енӗпе те пурнăçа кӗртес, пирӗн çӗнтерӗвӗн вăйлă тырпулне туса илме никӗс хывса хăварас тата выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе малалла вăйлатса пырас задача тăрать. Çаксене пурнăçа кӗртни Чăваш республикинчи колхозниксем хăйсен Тăван çӗршывне панă чи лайăх парне пулӗ. Çакна тăвас тесен, уйхир ӗçӗсем пуçланиччен юлнă кунсенче çуракине ăнăçлăн туса ирттерме мӗн кирлине пурне те хатӗрлесе çитермелле. Çуракин малтанхи кунӗсенчен пуçласах кал-кал тухăçлăн ӗçлемелле пултăр тесе, колхозниксен ӗçне тӗрӗс организацилемелле. Колхозниксем пурте, çамрăкисенчен пуçласа ваттисем таранах, ялхуçалăх специалисчӗсем, трактористсемпе комбайнерсем, çӗрӗç органӗсемпе МТС-сен работникӗсем, вăйлă тырпул—çӗнтерӳ тырпулӗ туса илес тесе, колхоз уйхирӗсенче ывăнма пӗлмесӗр ӗçлени кирлӗ.

Хăвăрт тата лайăх акмалла, тырпулсене тӗплӗн пăхса ӳстермелле, тырпулсене пухса кӗртес ӗçе вăхăтра хатӗрленсе ирттермелле. Государство умӗнчи пур обязательствăсене те сранчен пурнăçламалла,—çакăн пек ӗнтӗ пирӗн 1945 ялхуçалăх çулӗнчи пысăк задача.

Çӗмӗрле комбинатӗнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗн ырă пуçарăвне йышăнса илсе, колхозăлă ялта Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăрту анлăн сарса ямалла, вăйлă тырпул туса илес тӗлӗшпе тата колхоз выльăх-чӗрлӗхне ӗрчетмелли плана тултарас тӗлӗшпе татăклă обязательствăсем илмелле.

1944 çулта пирӗн республика выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе государство панă планӑ пурнăçа кӗртеймерӗ, республикăра пур тӗрлӗ выльăхсен йышӗ те чакрӗ. Çав вăхăтрах, 1943 çулта выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе лайăх ӗçленӗшӗн эпир Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илнӗччӗ. Халӗ пирӗн çак ӗçри пысăк çитменлӗхсене хăвăртрах пӗтерес тата социализмлă выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе малалла вăйлатас тесе, хамăран пӗтӗм вăя мобилизацилемелле. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăвармалла, выльăх-чӗрлӗх тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пымалла, выльăхсем валли çителӗклӗ чухлех апат хатӗрлесе хумалла,—çакăн пек пирӗн задача.

Чăваш республикин предприятийӗсенчи рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен республика юбилейӗ тӗрӳсемпе паллă тума чӗнеççӗ.

Культурăпа наука, искусствăпа литература работникӗсем умӗнче те пысăк задачăсем тăраççӗ. Наукăпа тӗплев учрежденийӗсен тата вӗренӳ заведенийӗсен ӗçне нумай лайăхлатмалла, культурăпа çутӗç учрежденийӗсен тата спорт организацийӗсен ӗçне вăйлатмалла, производствăпа йăлари культурлăхшăн кӗрешмелле, ӗçсыннисен художествăлла пултаруллăхне пур майсемпе те вăйлатса пымаяла,—çакăн пек ӗнтӗ республикăри совет интеллигенцийӗн задачи. Пирӗн халăх хăйӗн поэчӗсемпе писательӗсенчен, музыканчӗсемпе художникӗсенчен çӗнӗ те хамăран аслă саманана тивӗçлӗ произведенисем кӗтет.

Республика 25 çул тултарнине эпир кăçал Отечественнăй аслă вăрçă фрончӗсенче татăклă çапăçусем пынă лару-тăрура уявлатпăр. Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ ертсе пынипе пирӗн мухтавлă Хӗрлӗ Çар, фашистла немӗç захватчикӗсене хамăран Тăван çӗршывран хаваласа кăларчӗ, немӗç оккупанчӗсен пусмăрӗнчен хăтăлса ирӗке тухма Европăри тăванла халăхсене пулăшать. Хӗрлӗ Çар вăрçа тăшман çӗрӗ çине куçарчӗ. Хӗрлӗ Çар Германи столицине—Берлина çӗмӗрсе кӗчӗ. Фашистла тискер кайăка татăклăнах аркатса тăхас тата Берлин çинче пирӗн çӗнтерӳ ялавӗ яякăшса тăма тытăнас кун инсе мар ӗнтӗ.

Чăваш халăхӗн ывăлӗсем—пирӗн Тăван çӗршывăн тӳрӗ кăмăллă патриочӗсем—ССР Союзӗнчи ытти халăхсен представительӗсемпе çума-çумăн тăрса, советлă Тăван çӗршывшăн Хӗрлӗ Çар речӗсенче паттăрăн çапăçаççӗ. Вӗсем хăйсен орденлă республикин чысне çӳлте тытаççӗ. Немӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Совет Правительстви чăваш халăхӗн ывăлӗсемпе хӗрӗсене 20 пин çынна ытла СССР орденӗсемпе медалӗсене парса наградăларӗ. Вӗсенчен чи хастарлисем Совет Союз Геройӗн хисеплӗ ятне илме тивӗçлӗ пулчӗç. Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийӗ çӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Çар умӗнче, хăйсен землякӗсем—хăюллă воинӗсем умӗнче парăмра юлмӗç, фронта пулăшас ӗçе пур майсемпе те вăйлатӗç тата республика юбилейне тивӗçлипе кӗтсе илӗç.

Чăваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Халăх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ республикăри колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене, ялхуçалăх специалисчӗсене тата социализмлă çӗрӗçӗнчи мӗнпур работниксене Чăваш АССР-ӗн мухтавлă юбилейне çураки ӗçӗсене кăтартуллăн ирттернипе тата выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçри çӗнӗ çитӗнӳсемпе паллă тума чӗнеççӗ.

Чăваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Халăх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ республикăри предприятисенчи рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене, выраннти промышленноçпа коопераци промышленноçӗн работникӗсене Чăвашсен Автономиллӗ Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнин историллӗ кунне производствăра пысăк сӗнтерӳсем тунипе, 1945 çулти пӗрремӗш çур çулхи программăна пӗтӗмпех тата ирттерсе тултарнипе кӗтсе илме чӗнеççӗ.

Чăваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Халăх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ наука, культура тата искусство работникӗсене, писательсемпе артистсене, художниксемпе музыкантсене, учительсемпе врачсене — Чăваш республикинчи пӗтӗм совет интеллигенцине—чăваш халăхӗн формипе нациллӗ, содержанийӗпе социализмлă культурине çӗнӗ, татах та çӳлерех пусăма çӗклес тесе, хăйсен пӗтӗм вăйне хурса ӗçлеме чӗнеççӗ.

Паттăр Хӗрлӗ Çара пулăшассине пур майсемпе те вăйлатас тесе, икӗ хут ытларах вăй хурса ӗçлер, юлташсем!

Республика 25 çул тултарнин чаплă юбилейне халăх хуçалăхӗпе культурин пур пайӗсенче те çӗнӗ те татăклă çӗнтерӳсемпе паллă тăвар!

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ПРЕЗИДИУМӖ.

ЧĂВАШ АССР ХАЛĂХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ.

ВКП(б) ОБКОМӖ.

Берлиншăн çапăçни

Хӗрлӗ Çар воинӗсем Берлина çӗмӗрсе кӗчӗç. Халăхсем çав тери ӗненсе кӗтсе тăнă кун, эпир хамăр чӗрере кӗтсе тăнă кун çитрӗ!

Белоруссири 1-мӗш фронтпа Украинăри 1-мӗш фронт çарӗсем, наступлени пуçласа ярса тата нимӗçсен оборонине татса, Одер тывӗпе Нейсе тывӗ урлă каçрӗç те хăйсен хӗçне Германи чӗринче пырса тăрăнтарчӗç. Çапăçу Германи столицин урамӗсене пырса кӗчӗ. Гитлерла Германин юлашки сехечӗ çапать!

Нумай çапăçусемпе çӗнтерӳсем пирӗн чаплă Хӗрлӗ Çаршăн историллӗ çапăçу патне çитмелли çул çинче пусăм хыççăн пусăм пек пулса пычӗç. Мускав хапхи патӗнчен, Ленинград стенисем патӗнчен, Атăл çыранесемне Кавказ тăвӗсем патӗнчен хăваласа пытăмăр эпир тăшмана, çав аслă çул çинче совет воинӗн куçӗ умӗнче пӗр тӗллев—Берлин тăнă. Фашистла вăрăхурахсем пирӗн çӗр çинче тунă мӗнпур тискер ӗççемшӗн пирӗн вӗсене çакăнта тӳлесе таттармалла. Походри мӗнпур йывăрлăхсене çӗнтерсе пырса, совет воинӗсем умра Берлин тăнине курнă. Çав сăмах миллионшар çынсен кăкринче çунса тăнă, вăл пирӗн чӗресене çунтарнă, пире малалла кайма васкатнă. Çапăçу хирӗнче вилекен геройсем хăйсен тусӗсене Берлина çитме пехиллесе хăварнă. Гитлеровецсем çунтарнă совет çӗрӗ тăрăх утнă чухне, Польшăна Чехословаки, Югослави çӗрӗсенчи аркатса, çаратса пӗтернӗ хуласемпе ялсем витӗр тухнă чухне, пирӗн боецсем Берлина çитме тупа тунă. Совет çарӗсем иртсе пыракан çулсем çинче тӗл пулакан хӗрарӑмсемпе ачасем тата ватă çынсем боецсене Берлина çитме хушса яна.

Вӗсем çитрӗç! Вӗсем çын вӗлерекен хулан, харампыр-хулан урамӗсене çӗмӗрсе кӗчӗç. Çав хуларан Гитлерăн ушкăнӗсем—халăх палачӗсем миллионшар çынсен пуçӗсем çине хăйсен юнлă аллине çеклеççӗ. Çавăнтан Германи империалисчӗсен вăрă-хурахла ирсӗр планӗсене тунă. Çавăнтан гитлеровецсен этемлӗхе курайман пропаганди, халăхсене курайманлăхăн наркăмăшӗ пӗтӗм çут тӗнче сывлăшне нăсса сарăлнă.

Ленинград артиллерисчӗсем Берлин урамӗсенелле пӗрреиӗш снаряд кăларса яни, Сталинград геройӗсем Германи столицин урамӗсене çӗмӗрсе кӗни, кăкăрӗсем çине «Мускава хӳтӗленӗшӗн» ятлă знаксем çакнă воинсем Берлин оборонине çӗмӗрни тӗнчере чи аслă тӗрӗслӗх пулса тăрать. Паян пирӗн пӗтӗм çӗршывăн пӳрнисем Германин карланкине пăчăртаса тытрӗç.

Вут-çулăмра авкаланакан Берлин паян пӗтӗм тӗнче умӗне ответ тытать. Унăн шутлă сехетсем кăна юлчӗç, çав сехетсем хаяр çапăçу вут-çулăмӗнче ăвăс ирӗлнӗ пекех ирӗлеççӗ. Гитлерла вăрă-хурахсем виçӗ кун каярах кăна: «Берлина юлашки чул юлмиччен хӳтӗлетпӗр», тесе эфирта çуйăхатчӗç. Паян Берлинри радио нимӗн те шарламасть. Совет снарячӗсем унăн пырне пăкăласа хучӗç. Германи ӗнтӗ хăй çӗрӗн çурринче ытла çухатрӗ. Совет çарӗсем Дрезден хули патне çывхарса çитрӗç, союзниксем Лейпциг хулине тасатаççӗ. Германи çӗрӗнчен мӗн тăрса юлнине те тӗрӗссипе татăкăн-кӗсӗкӗн вакланă ӗнтӗ. Фашистла çӗленсем вилес умӗн чашкăрсах авкаланаççӗ. Тăшман урса кайсах хирӗç тăрать. Анчах унăн кунӗсене картса хунă!

Ирӗклӗхе юратакан халăхсем гитлерла тискер-кайăксене хирӗç туса пыракан историллӗ çапăçура Хӗрлӗ Çара чи пысăк пыс тивет. Хӗрлӗ Çар тăшмана татăклăн пыра-пыра çапрӗ. Пирӗн геройла çар гитлеровецсене пуринчен малтан çапа-çапа аркатрӗ. Вăл Германин вăрçă машинин çурăм шăммине çапса хуçрӗ. Халӗ вăл хамăран союзниксен çарӗсемпе пӗрле тăшмана юлашки хут вӗлермеллех пырса çапать.

Хӗрлӗ Çар хăйӗн вăрçă вăхăтӗнче ӳссе çитӗннӗ пӗтӗм улăпла пӗвене Берлин умне пырса тăчӗ. Хӗрлӗ Çар вайсăрланмарӗ, вăл нихăçанхинчен те хăватлăрах та вăйлăрах пулса тăчӗ. Вăл гитлерла Германия чӗрине пӗр хӗрхенмесӗр, çирӗппӗн те тӳррӗн пыра-пыра çапать.

Сталин генийӗ ертсе пыракан Хӗрлӗ Çаран хăватлă утăмӗ фашистла тискер кайăкăн йăвине тӗпне çитичченех кисретет. Эпир вăрçăн юлашки каçарусăр уттине илтетпӗр. Çакă вăл аслă тӗрӗслӗх Ленин утăмӗпе утать. Çакă вăл Сталинăн аслă çӗнтерӳ науки хăйӗн чаплă уявне уявлать.

Берлин çине тапăнса пынă историллӗ кунсенче совет халăхӗ Владимир Ильич Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнине палăртрӗ. Çак кунсенче кашни совет çынни пирӗн аслă çӗнтерӳсем Владимир Ильичăн пурнăçӗпе, ӗçӗпе, кӗрешӗвӗпе тата унăн идейисемпе мӗн тери таччăн сыхăнса тăнине татах та витӗмлӗрех туйса илчӗ.

Ленинпа çӗнтерӳ! Ленин совет халăхӗн çӗнтерӗвӗсенче пурăнать, малалла та пурăнӗ. Аслă Сталин Ленин çулӗпе ертсе пыракан совет халăхӗ халӗ историлле чи çӳллӗ тӳпине хăпарать.

Ленин ялавӗпе хавхаланнă, тăван та юратнă Сталин ятне чӗрере тытакан совет полкӗсем Берлина штурмлаççӗ, вӗсем халиччен нихăçан курман çӗнтерӳ патне пыраççӗ!

Юратнă тăван Хӗрлӗ Çара — мухтав! Унăн полководецӗсене — мухтав!

(«Известия», апрелӗн 24-мӗшӗнчи умстатья).

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 23-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем, ОДЕР шывӗн хӗвелнăç хӗрринчи плацдармсем çинчен наступлени пуçласа ярса, артиллерипе авиаци йышлăн тапăнса пулăшнипе, нимӗçсен БЕРЛИН хулине хӗвелтухăç енчен хӳтӗлесе тăракан вăйлă çирӗплетнӗ тата шалалла инçете каякан оборонине татнă та 60 километртан пуçласа 100 километр таран малалла кайнă, ОДЕР çинчи ФРАНКФУРТ хулинне, ВАНДЛИТЦ, ОРАНИЕНБУРГ, БИРКЕНВЕРДЕР, КЕНИГСДОРФ, ПАНКОВ, ФРИДРИХСФЕЛЬДЕ, КАРЛСХОРСТ, КЕПЕНИК хулисене туртса илнӗ, Германи столицине БЕРЛИНА вăрăнса кӗрсе кайнă. Апрелӗн 22-мӗшӗнче пулса иртнӗ çапăçусенче фронт çарӗсем 4.000 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тытăнă илнӗ тата 85 хир туппи, 3.100 автомашина, 67 паровоз, 1.800 чугун çул вагонӗ тата тӗрлӗрен çар пурлăхӗн 30 складне тытса илнӗ.

УКРАИНĂРИ 1-мӗш фронт çарӗсем, наступлени туса тытăнса, артиллерипе авиаци йышлăн тапăнса пулăшнипе, нимӗçсен НЕЙСЕ шывӗ çинчи вăйлă тӗреклетнӗ тата шалалла инçете каякан оборонине татнă та 80 километртан пуçласа 160 километр таран малалла кайнă, КОТТБУС, ЛЮББЕН, ЦОССЕН, БЕЕЛИТЦ, ЛУКЕНВАЛЬДЕ, ТРОЙЕНБРИТЦЕН, ЦАНА, МАРИЕНФЕЛЬДЕ, ТРЕББИН, РАНГСДОРФ, ДИДЕРСДОРФ, ТЕЛЬТОВ хулисене туртса илнӗ тата Германи столицине БЕРЛИНА кăнтăр енчен вăркăнса кӗрсе кайнă.

Кунта пӗр вăхăтрах фронт çарӗсем ДРЕЗДЕН енче ЗССЕН, КИРХХАЙН, ФАЛЬКЕНБЕРГ, МЮЛЬБЕРГ, ПУЛЬСНИТЦ хулисене çапăçса туртса илнӗ тата ДРЕЗДЕНРАН çурçӗр-хӗвелăнăçнерехре ЭЛЬБА шывӗ çине тухнă.

Апрелӗн 22-мӗшӗнче пулса иртнӗ çапăçусенче фронт çарӗсем 7.000 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тытăнă илнӗ тата 200 танк, 105 хир туппи, 3.000 автомашина тытса илнӗ.

УКРАИНĂРИ 4-мӗш фронт çарӗсем, наступлени туса пырса, апрелӗн 22-мӗшӗ вӗçленнӗ тӗле Чехословаки çӗрӗнче ОПАВА (ТРОППАУ) хулине—çулсен паха узелне тата нимӗçсен оборонин вăйлă тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ.

Чехословаки çӗрӗнче, ГОДОНИН хулинчен кăнтăр-хӗвелăнăçнерехре, УКРАИНĂРИ 2-мӗш фронт çарӗсем МИКУЛОВ хулине тата ЛЕДНИЦЕ, ПУЛГАРИ, ПАВЛОВ, ПЕРНА, ПРАТЛСБРУН, ДОЛЬНЫЕ ДУКАЕВИЦЕ, ДОБРОЕ ПОЛЕ ялӗсене çапăçса туртса илнӗ.

Фронтăн ытти участокӗсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелӗн 22-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 165 танкӗпе хăй тӗлӗн çӳрекен туппине çӗмӗрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернӗ.

Совет Союзӗн, Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Великобританин Правительствисем Германин мӗнпур комендантчӗсене, хурал çыннисене тата гестапо служащийӗсене асăрхаттарни

Апрелӗн 23-мӗшӗнче виçӗ Правительствăн—Совет Союзӗн, Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Великобритани Правительствисен пуçлăхӗсем Пӗрлешнӗ нациесен ячӗпе Германи командованине çакăн пек пӗлтернӗ тата Германири мӗнпур фронтсенче çакăн пек заявлени сарнă:

«Германие хирӗç вăрçакан мӗн пур Пӗрлешнӗ нациесен ячӗпе Совет Союзӗн, Пӗрлешӳллӗ Королевствăн тата Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисем союзниксен тытăкăна лекнӗ çар çыннисене Германире тата Германи оккупацинленӗ территорисенче хуралласа тытса тăракан мӗнпур комендантсемпе хурал çыннисене, çавăн пекех тата союзниксен тытăкăна лекнӗ çар çыннисене тытса тăракан гестапо служащийӗсемпе ытти мӗнпур çыннисене, вӗсен службинче рангпе пăхмасăрах, вӗсем çав çыннисене ăçта (çапăçусен зонинче-и, çулӗрсен линийӗнче-и е тылри районсенче-и) тытса тăнине пăхмасăрах, çакăн çинчен чаплă асăрхаттараççӗ: асăннă çыннсене вӗсем хăйсен аллинче тăракан тытăкăнри çар çыннисен пурнăçӗпе хăрушсăрлăхӗшӗн Германин верховнăй командованийӗпе тата Германин çар, тинӗс-çар тата авиаци влаçӗсемпе пӗртанах ответлă пулса тăраççӗ тесе шутлаççӗ.

Союзниксен тытăкăна лекнӗ çар çыннисене кирек хăшпе те усал тăвакан е вӗсене усаллăн тытăлакан кирек хăш çынна та (çакăн пек ӗç çапăçу зонинче-и, çулӗрсен линийӗнче-и, лагерьте-и, госпитальре-и, тӗмере-и, е ытти вырăнта пулать-и,—пурнӗрех) пӗр шеллемесӗр наказани парасси çинчен пӗлтереççӗ.

Совет Союзӗн, Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Великобританин Правительствисем çапла асăрхаттараççӗ: çаванпек ответа ӗç кирек мӗнле условире пулса иртсен те тытмалла пулать, вăл ответлăха урăх влаçсем е урăх çынсем çине сирсе ярса унтан хăтăлма май пулмасть.

Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН, Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ Г. ТРУМЭН, Великобританин премьер-министрӗ У. ЧЕРЧИЛЛЬ».

ТАСС хирӗçлесе калани

Ют çӗршывсен пичечӗн пӗр пайӗ, вăл шутра Лондонра тухакан «Санди Таймс» хаçат та, çакăн пек хыпарсем сараççӗ: Крымри конференцире Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцине Польшăн çӗнетнӗ правительствин представительӗсене кăна чӗнмелле. Польшăн Варшавăри Вăхăтлăх правительствин представительӗсене чӗнмелле мар тесе йышăннă, пулать.

ТАСС çапла пӗлтерме полномочи илнӗ: çакăн пек пӗлтернисем пӗртте тӗрӗс мар. Крымри конференцире ку ыйту пирки решени йышăнма мар, вăл ыйтăва сӳтсе те явман. Çапла вара, Крымри конференцин решенийӗсем Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцине Польшăн Варшавăри Вăхăтлăх правительствин представительӗсене чӗнме канцӗрлемеççӗ.

ТĂШМАНĂН ШĂПИ ТУЛЧӖ

МУРКАШ, апрелӗн 24-мӗшӗ. (Телефонça). Пирӗн Хӗрлӗ Çар Берлина çӗмӗрсе кӗни çинчен радиопа пӗлтернине районри ӗçсыннисем пысăк сӗкленӳпе кӗтсе илчӗç. Çак ятпа колхозсемпе промартельсенче саванаçлă митингсем пулса иртеççӗ. Паян çаван пек митинг Муркаш ял Советӗнчи «Авангард» колхозра пулчӗ. Хӗрлӗ Çаран чаплă сӗнтерӗвӗсем çинчен митингра агитатор, ватăм шкул директорӗ Д. Григорьев юлташ каласа панӗ. Ун хыççăн темиçе колхозник тухса каласрӗç. Колхозник В. Виноградов юлташ, фронтран аманса таваррăнаскер, çапла каларӗ:

— Эпир кӗтнӗ вăхăт çитрӗ—мухтавла Хӗрлӗ Çар чаçӗсем тискер кайăкăн йăвине — Берлина çитсе кӗчӗç. Хӗрлӗ воинсем халӗ тăшман йăвине тустараççӗ. Тăшман пусӗпех пӗтес вăхăт çитрӗ, унăн шăпи тулчӗ.

Колхоз бригадирӗсем Крылованпа Кулькова юлташсем те митингра самахсем каларӗç.

«Авангард» колхоз членӗсем, Хӗрлӗ Çаран историллӗ çӗнтерӗвӗ çине ответлесе, малашне татах та тухăçлăрах ӗçлеме, çуракине 8 кунра ирттерме, кăçал кашни гектартан 100 пăтман кал мар тырпул туса илме тата государство умӗнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама пулчӗç.

Пирӗн çарсем Берлина кӗнӗ ятпа митингсем ирттерме райцентрти партине совет активӗнчен 35 çын колхозсемпе промартельсене карӗç.

Ф. МАЛЫШКИН.

ПУШАР ДРУЖИНИН НАЧАЛЬНИКӖСЕНЕ ВӖРЕНТСЕ КАЛАРНА

Сӗнтӗр районӗнчи милици отделенийӗ колхозсенчи пӗрлӗ пушар дружинин начальникӗсене вӗрентме 10 кунлăх курс организациленӗ. Çак кунсенче вăл курсран 30 çын вӗренсе тухнă.

СУРАКИ УМĔН

10 гектар пăри акнă

КАЛИНИНО, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Хăмăр юрр., телефонпа). Çавалкассинчи «Сутталла» тата Уславари «Броневик» колхозсем суртыррисем акмалли вырăна сухалама тытăннă. «Сутталла» колхоз 10 гектар пăри акнă. Районри пур колхозсем те клевер акса пĕтернĕ. Пур колхозсенче те кĕрхи тырă калчисене апатлантарасси тата çĕрулминне провизацилесси анлăн пырать. Нумай колхозсем кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене суйласа сурелеççĕ.

Н. КУЗЬМИН.

Трактор сем ĕçлеме тухса кайнă

ЙĔПРЕÇ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Ешер МТС-ăн 1-мĕш, 4-мĕш, 9-мĕш трактор бригадисем колхозсене тухса кайрĕç. Паян-ыран МТС-ри тата 12 бригада колхозсене тухса каяççĕ.

Районри колхозсем клевер акма тытăннă. «Молния» колхоз 16 гектар, «Правда» колхоз 20 гектар клевер акнă. Çавăн пекех «Большевик», Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те клевер акаççĕ.

П. КУРАКОВ.

Клевер акса пĕтернĕ

Комсомольски районри пур колхозсем те клевер акма тытăннă. «Трактор», «Ударник» колхозсем клевер акса пĕтернĕ.

Сурхи тырăсем акмалли лаптăксене сухалаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Хусаккасси ял Советне кĕрекен «Комбайн» колхозра сурхи тырăсем акмалли лаптăксене—тăпра писсе ситнĕ вырăнсене суйласа сухалама тытăннă. Уйхирте 10 плугпа ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне çак колхоз пурĕ 13 гектар сухалаянă. Хăшпĕр колхозсенче кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сурелеме тытăннă.

Нумай колхозсенче кĕрхи тырă калчисене тислĕк шĕвекĕпе, çĕрнĕ тислĕкпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантараççĕ. Районĕпе пурĕ 307 гектар çинчи калчасене апатлантарнă.

Районра клевер акас ĕç те хĕрсех пырать. «Четай» колхоз 30 гектар, Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз 13 гектар, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 25 гектар, «Красный Боренер» колхоз 28 гектар акнă, районĕпе пурĕ 682 гектар клевер акнă.

Анчах та уйăм колхозсем клевер акас ĕçе пĕр сăлтавсăрах тăсса пыраççĕ.

«Валазар» колхоз 18 гектар, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар, «Ударник» колхоз 11 гектар клевер акмалла. Çак колхозсем паянхи куна та клевер акма тухман.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

Шупашкар районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра Д. Максимовпа Г. Александров 4 вăкăра кулса ĕçлеме вĕрентнĕ. Вĕсемпе халĕ хире тислĕк турттараççĕ, сурахи вăхăтĕнче вăрлăхсем турттарма шутлаççĕ.

В. СПИРИДОНОВ.

Пушартан сыхланар

Юлашки вăхăтра республикăра пушарсем пулни палăрать. Вĕсен сăлтавĕсем—вут-кăвара асăрханса тытказмаллине тата ача-пăчана кирлĕ пек пăхса тăманни. Январьпе февраль уйăхĕнче çак сăлтавсемпе 30 çĕрте пушар тухнă. Çав пушарсем государствăна та, кил-çурт хуçисене те пысăк сиен кӳнĕ.

Хăшпĕр çĕрте вуткăвара асăрханса тытказмаççĕ: лампăсем, хăйсем сутса çенĕке е кĕлете тухаççĕ, кĕле хуралта таврашĕнче тытаççĕ, камака çинче кантăр типĕтеççĕ т. ыт. те. Çавăнпа хĕтмен çĕртен пушарсем тухаççĕ, пысăк инкек кӳреççĕ. Сăмахран, Ишлей районĕнчи Хурамакасси ялĕнче январь уйăхĕнче пушар пулнă. Матвей Захаровăн хĕрачи, Анна, амбара хăйă сутса тухнă. Хăйă кăварĕ амбарти сӳс çине ӳксе юлнă. Кăшт тăхтасан, çавăнтан пушар тухса, амбар çуса кайнă. Пӳрт те сиенленнĕ, икĕ качакапа сурăх пĕтнĕ.

Февраль уйăхĕнче Шăхасан районĕнчи Турханкас Чарпуç ялĕнче пушар пулнă. Андреева колхозница вăрман ĕçлеме кайнă, килĕнче ачасене пăхма кӳршери Алексеева юлташа хăварнă. Алексеева ачасене тăла-çапата цисе пама камака патне хăйăпа пынă. Хăйăран камака çинчи кантăр сӳсне вут хыпса илнĕ. Çулăма мĕнпе те пулин хупласа сӳнтерес вырăнне, вăл кил хушшине шыв патне чупса тухнă. Шыв илсе кĕриччен пушар мĕнпур пӳрт ăшчикĕнне ярса илнĕ. Çав вăхăтра Андреевăн виçĕ ача писсе кайнă. Алексеева хай те алли-урисене пĕсертсе янă. Çапла çурт çунса кайнă, ачисем кайран больницăра вилнĕ.

Ача-пăчаран тухнă пушарсене цисе пăхсан, çакă курăнать. Вĕсем ачасене ашшĕ-амăшĕсемпе аслисем пăхса тăманнинчен, спичкăпа ыттисем çунакан япаласене тĕрĕс мар тыткаланинчен, тепĕр чух тата ача-пăчасене ытлашши аталантарнинчен пулаççĕ. Тĕслĕхрен, Сĕнтĕр районĕнчи Пискасси ялĕнчи Максимова колхозница хăйĕн аслă хĕрачине вутă татма тухнă. Пӳртре трубасăр лампа çунса ларнă, унта виçĕ ача пулнă. Ачисем, амăшĕ сукине кура, вутпа выляма тытăннă та кантăр сӳсне тивретсе янă. Вара пушарта Максимова колхозницăн ачисем виçсĕшĕ те вилнĕ.

Çавăн пек пушар Вăрмар районĕнчи «Аниш» колхозра та пулнă. Çак колхозри Мулина Мария, 3—5 сулхи икĕ ачине хăварса, ĕçе кайнă. Ачисем вучахри кăвара кăларнă та выляма тытăннă. Кăвар урайĕнчи сӳп-сапсемпе çĕтĕк-çатăксем сине ӳкнипе пушар тухнă. Пушарпа Мулинăн хуçалăхĕ çунса кайнă.

Кун пек тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать. Вуткăвара асăрханса тытказманнинчен, ачасене пăхса тăманнинчен пысăк инкек кӳрме пулать: кил-çурт выränне кăмăрăк юлать, ачасем, хамăртан уйăраççĕ.

Çавăн пек инкек-синкек ан пултăр тесен, пушартан сыхланмалли йĕркесене пăхăнса пурăнас пулать. Килте те, ĕçре те вĕсене пурнăçа кĕртсе пыни кирлĕ. Çунтармалли япаласем пур çĕрте, уйрăмах выльăх витисенче, итем çинче, утăулăм тытнă вырăнсенче табак туртма, вут-кăвар тыткалама юрамасть. Çенĕкре, карлăк умĕнче, кил хушшинче самавар лартмалла мар. Самавар трубинчен тухакан хĕм, çунакан япаласем сине лексе, пушар кăларма пултарать. Самавара камака умĕнче, çунман япаласем сине лартса, кăна вĕретмелле. Çавăн пекех кĕле çуртйĕр тавращĕнче тытма юрамасть, ăна çуртйĕртен аякра ятарласа алтнă шăтăксене тăкмалла.

Çулла ачасем ирĕке тухаççĕ, çавăнпа вĕсем вуткăварпа аташни ытларах пулма пултарать. Ачасем инкек-синкек ан кӳччĕр тесен, вĕсене ачасен сачĕсемпе яслисене ярас пулать. Çуллахи уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче кашни колхозрах ача яслисемпе сачĕсем усмалла. Ачасене çулла пĕччен пăрахса хăвармалла мар, спичкăпа ытти вут-кăвар тухакан япаласене тыттарма юрамасть.

Предприятисемне учреждениссн руководителĕсен, ял Совет председателĕсен, пушар хуралĕсен пушартан сыхланмалли йĕркесем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесех тăмалла, çав йĕркесене пăсакансене хирĕç кĕрешмелле.

А. ТЮРИКОВ,
Кĕçĕн техник-лейтенант.

Апрель уйăхĕнче ĕç лайăхрах пырать

ШĂХАСАН. Районри промкомбинат март уйăхĕнчи производство планне 104 процент тултарчĕ. Иртнĕ уйăхра уйрăмах тир-сăран тăвакан мастерской тухăçлă ĕçлерĕ. Унта ĕçлекенсем хăйсен нормисене 2-мĕш хут иртерсе тултарчĕç. А. Семенов, С. Кашаев тата Михайлова юлташсем —мастерскойри чи лайăх стахановецсем.

Анчах иртнĕ уйăхра комбинат ĕçĕнче çитменлĕхсем те пулчĕç. Чăлха сыхакан цех уйăхри плана 66 процент çеç тултарчĕ. Ку вăл чăлха сыхакансен ĕç тухăçлăхĕ начарринчен килчĕ. Артемьевăпа Ильина работницăсем хăйсен нормисене сурри ытларах çеç тултарнă.

Малашне пирĕн çав çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Апрель уйăхĕнче плана пур пехсем тăрăх та тата кашни изделие енĕпе тултармалла. Çак задачăна пурнăçлама пире социализмла ăмăртса ĕçлени пулăшать. Пирĕн коллектив Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ.

Комбинат хăйĕн производствине анлăлатсах пырать. Çĕнĕрен хром тăвакан мастерской уçрăмăр. Унта ĕçлекенсем хром начар мар тăваççĕ.

Подсобнăй хуçалăха суракине хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем чылай-ка. План тăрăх 7 гектар тырпул акса тата пахчасимĕç картса хăвармалла. Вăрлăх хатĕрлесе, ялхуçалăх инвентарĕсене юсаса çитеретпĕр ĕнтĕ. Анчах та пирĕн подсобнăй хуçалăх валли çĕр уйăрса паман-ха. Çав ыйтăва райсовет исполкомĕ татса парасса кĕтетпĕр.

И. ПЛАТОНОВ.
Промкомбинат управляющийĕ.

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔПЕ БРИГАДИРНЕ ПАНĂ КАНАШСЕМ

Чăваш АССР Наркомземĕпе Чăвашгосиздат «1945-мĕш сулхи суракине хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе колхоз председателĕпе бригадирне панă канашсем» ятлă кĕнеке кăларнă. Çав кĕнекене ялхуçалăх специалисчĕсем, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн профессорĕсемпе научнăй сотрудникĕсем çырнă.

ЛЕНИН ÇУРАЛНĂРАНПА 75 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ ХИСЕПЛЕСЕ ИРТТЕРНĔ ЧАПЛĂ ЛАРУ

Апрелĕн 23-мĕшĕнче Советсен Сӳтĕнче Владимир Ильич Ленин çуралнăранна 75 çул тултарнине хисеплесе Шупашкар хулинчи парти, совет тата общество организацийĕсен чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Пуху президиумĕнче—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Ахазов, Андреев, Винияков юлташсем, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ, ЦК ВКП(б) сумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, ВКП(б) Шупашкар хула Комитечĕн секретарĕсем Романова, Ислюков юлташсем т. ыт. те.

Тăваллăн алă çупса, пуху Хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйланă.

«Ленин—Сталин идейисем совет халăхне татăклă çĕнтерӳшĕн кĕрешме хавхалантараççĕ» ятлă темăпа ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Ислюков юлташ доклад тунă.

В. И. Ленинăн шанчăклă юлташне тата унăн вилĕмсĕр ĕçне малалла гениле туса пыракан аслă Сталина пуху çав тери хавхаланса салам янă.

В. И. Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнине пĕтĕм çĕршыв уявланă

Ленин хулинче

Ленинград сыннисем В. И. Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнине уявланă. Ленинградра Владимир Ильич тĕрлĕ çулсенче пурăннă хваттер-музейсене курма пыракансем валли çĕнĕрен уçнă.

Нумай сынсем Ленин ураменчи (ĕлĕк Широкая пулнă урам, 48) 9-мĕш çурта пырса курнă. Ку суртри хваттерсенчен пĕринче Ленин 1917 çулта пурăннă, унта хăйĕн чылай произведенийĕсене çырнă, партин Центральный Комитечĕн канашлăвĕсене ирттернĕ. Çак хваттерте ун патне час-часах И. В. Сталин, Я. М. Свердлов, В. М. Молотов, С. Орджоникидзе пыра-пыра кайнă. Ленинград сыннисем Ильич ячĕпе сыхăнса тăракан япаласене пурне те—фотоӳкерчĕксене, Владимир Ильич 150 статья çырнă сĕтеле, креслăна тата ытти япаласене те—юратса пăхаççĕ.

Государствăн публичнăй библиотекинче В. И. Ленин ячĕпе выставка уçнă. Библиотекăн вуламалли залĕнче Владимир Ильич час-часах пулнă.

ВКП(б) Ленинград горкомĕн лекторийĕн пысăк залĕнче В. И. Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнă ятпа пысăк вечер пулса иртнĕ. (ТАСС).

Ильич çуралнă хулара

Ульяновск хулинче пурăнакан 2.000 çын ытла В. И. Ленин çуртне-музейне пырса пăхнă. Нумай çынлă экскурсисем Гончаров ячĕпе тăракан художество музейĕнче. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставкинче пулнă.

Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнă ятпа иртнĕ нумай çынлă пухусенче облаçри ĕçхалăхĕ пысăк хавхаланупа Сталин юлташ патне çырусем яма йышăннă. Вăл çырура ĕççыннисем фронта пулăшассине вăйлатма, промышленноçпа ялхуçалăх продукцине ытларах кăларма, çуракине кăтартуллăн иртерме сăмах панă. (ТАСС).

В. М. Молотов Вашингтонра

ВАШИНГТОН, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Авторитетлă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, США президенчĕ Трумэн Гринвич вăхăчĕпе 00 сехет те 30 минутра В. М. Молотова йышăннă. Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, В. М. Молотовпа Трумэн 30 минута яхăн калаçнă. Калаçу хыççăн Молотов, Иден, Стеттиниус, Громыко, Гарриман, Керр, Кадоган, Данн тата Болен государство департаментĕнче канашлама пуçланă. Вăл канашлу пĕр сехет те 20 минут хушши пынă. Апрелĕн 23-мĕшĕнче канашлу татах пуçланмалла тесе шутлаççĕ.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян, Вашингтон вăхăчĕпе 10 сехет те 30 минутра, Молотов, Стеттиниус тата Иден малалла канашлама пуçланă.

Государство секретарĕн заместителĕ Грю тата государство секретарĕн помощникĕ, виçĕ державăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен ĕнерхи канашлăвĕнче пулнăскерсем, паянхи канашлура та пулнă.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине В. М. Молотов, Э. Стеттиниус, А. Иден тата вĕсен помощникĕсем пĕр сехет çурă хушши канашланă. Государство секретарĕн заместителĕ Грю корреспондентсене канашлу «кĕске вăхăтлăха чарăннă», тесе пĕлтернĕ.

Пичет представителĕсемпе калаçнă чухне Стеттиниус çапла пĕлтернĕ: «Эпир халĕ те канашлатпăр-ха», тенĕ.

Государство департаменчĕ пĕлтернĕ тăрăх, виçĕ державăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕнче Громыко, Лондонри посольствăн советникĕ Соболев, государство департаменчĕн Хĕвелтухăç Европа ĕçĕсен управленийĕн руководителĕ Дарроу, çавăн пекех тата Иден помощникĕ Бирс майор тата ытти сем те пулнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицийĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, союзниксем Гамбург районĕнче Ротенбург тата Букстенхуд хулисене йышăннă. Союзниксен çарĕсем, Эльба шывĕ тăрăх куçса, Бленкеде хулине тасатнă.

Лейпциг хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен патрулĕсем Мульде шывĕ урлă каçнă та темиçе километр малалла куçнă, тăшман вĕсене хирĕç тăман.

Швейцари чиккинче хĕвелтухăçнелле 13 километр куçса, союзниксем Вороблинген хули патне çитнĕ.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче союзниксем 37.276 çынна тыткăна илнĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен хĕçпăталлă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калана: По шывĕ улăхĕнче 5-мĕш 8-мĕш армисен пехотипе танковăй чăсĕсем По шывĕ тăрăх малалла куçса пыраççĕ. 5-мĕш армин чăсĕсем Болонья хулинчен 15 километр сурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Сан-Джованни хулине тытса илнĕ. Секкьо тата Панаро шывĕсем урлă каçса кайнă. Çав армин ытти чăсĕсем Модена хули патне çывăхараççĕ. 8-мĕш армин чăсĕсем Феррара хулинчен 2 мильăра тăраççĕ.

Итальянецсен партизан отрячĕсем, 5-мĕш армин çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Болонья хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Сестола хулине йышăннă.

ВАРШАВА ХУЛИНЧЕ ЛЕНИН ЯЧĔПЕ ПУЛСА ИРТНĔ ЧАПЛĂ ЛАРУ

ВАРШАВА, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ешер Варшавăри Халăх Совечĕн суртĕнче Владимир Ильич çуралнăранпа 75 çул тултарнине хисеплесе чаплă лару туса иртнĕ. Ларăва Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи пухнă. Зала Совет Союзĕн тата Польшăн государство ялавĕсемпе илемлетнĕ. Пухăннисем хушшинче—Вăхăтлăх правительство членĕсем, Польшăри политикăллă партисен членĕсем, наукăпа искусство представителĕсем, общество организацийĕсен деятелĕсем, юг çĕршыв государствисен представителĕсем, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Сарпа Польша çарĕн представителĕсем пулнă. Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин председателĕ Вассовский профессор хăйĕн умĕнче Ленин ĕçхалăхăн çулпуçĕпе государство деятелĕ пулнине палăртнă. Ленин, тенĕ Вассовский, Хĕрлĕ Çара туса йĕркеленĕ. Ленинăн аслă соратникĕ Сталин Маршал ертсе пыннипе Хĕрлĕ Çар халь Европăна пĕтсе ларассинчен çăлса хăварчĕ тата Польшăна ирĕке кăларчĕ. Халĕ, Сталин Маршала пула, Варшава хули юсанса пырать.

В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Охаб господин доклад туса панă. Хăйĕн докладĕнче вăл уйрăмăнах Польша никама пăхăнман государство пулласси çине Ленин мĕнле пăхнине палăртса панă.

Юлашкинчен пухура пулнисем, тăвăлăн алă çупса, Сталин Маршал патне яма çакăн пек саламлă сыру йышăннă:

«Варшава хулинчи граждансем, Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнă ятпа пухăннăскерсем, Сире, аслă Маршал, Совет Союзне туса хураканăн шухăшĕсемпе прĕкне малалла атлантаракан аслă çын вырăнне хурса, çав тери хисеплеççĕ. Ленинăн плейисене пурнăçа кĕртсе пырса, Эсир Совет Союзне хăватлă туса хутăр. Эсир ертсе пыннипе Хĕрлĕ Çар нимĕç пусмăрĕнче асап кураканăн халăхсене прĕке кăларать, вăл Польшăна çăлса хăварчĕ. Тăшмана татăклăн çĕнтерес умĕн Сире, Маршал, хисеплесе тав тăваттăр».

ПАРИЖРА ЛЕНИНА АСАНСА ИРТТЕРНĔ ЦЕРЕМОНИСЕМ

ПАРИЖ, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер, Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнă майпа, 1908 çулхи декабрь уйăхĕнче тата 1912 çулхи июнь уйăхĕнче Париж хулинчи 14-мĕш округра Ленин пурăннă икĕ çурт çине мемориальнăй хăмасем çаннă. Унта СССР-ăн Франшири посолĕ Богомолов, Сена префекчĕ Флуре тата Франци ытти деятелĕсем пулнă. «Франци—СССР» ятлă общество комитечĕн генеральнăй секретарĕ Франкер, Флуре префект тата Богомолов юлташ сăмахсем тухса калана.

ПОЛЬШĂПА СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧИ ДОГОВОР ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН КАЛАÇСĔ

ПАРИЖ, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио Польшăпа Совет Союзĕн пĕр-пĕринне туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшасси тата варçă хыççăн пĕрлешсе еçлесси çинчен туна Договорĕ çинчен калаçа панă. Хăйĕнчен хушса каланисенче радио çакна палăртать: çак договор пысăк выран йышăнса тăракан политикăллă событи пулса тăрать. Нумай çулсем хушшинче тискер тата агрессиллĕ Германи Польшăна çĕмĕрсе кĕрессине хăратса тăнă. Кунсăр пуçне, Германи пропаганди пур майсемпе те Совет Союзĕпе Польшăна пĕр-пĕрне шанчăклă тума тăрăшнă. Польшăпа Россия пĕрне-пĕри анланманнинчен тухса пынă япаласем халь Совет Союзĕпе Польша хушшинчи договора пула пĕтсе ларĕç.

КĔСКЕН

* Америка çарĕсем Магдебург районĕнче самолетсем валли реактив двигательсем туса кăларакан çĕр айĕнчи авиапи заводне тытса илнĕ. Завод пĕр уйăх хушшинче 500 двигатель туса кăлармалла пулнă. Вăл завода нумаях пулмасть ĕçе янă пулнă. Вăл двигательсен пĕрремĕш ушкăнне туса кăларассине вĕçлесе пынă.

* США правительствипе Бельги правительстви килĕшӳ тунă. Вăл килĕшӳ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Бельгие вăрçа валли кирлĕ япаласем тăратмалла.

* Эсэсовецсем Лейпциг хулинчи çар заводне ĕçлеме хăваласа пынă ют çĕршыв рабочийĕсене 200 çынна чĕреллех сунтарса янă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00327

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000